# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

78 (7503) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăça кĕртессипе малтисенчен пĕри

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикинче пулнă май Раççей Президенчĕ Владимир Путин наци проекчĕсене пурнăça кĕртессипе лару-тăру мĕнле шайра пулнипе интересленнĕ.

Патшалăх пуçлăхĕн ĕçлĕ визичĕ Белгород облаçĕнче Пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем тата демографи политики енĕпе ĕçлекен канашĕн ларăвĕ пулас умĕн иртнĕ. Чăваш Енре вара Владимир Путин практикăра «Вĕрентӳ» тата «Сывлăх» пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем мĕнле пурнăçа кĕнипе паллашнă. Ку тĕллевпе вăл вĕрентĕвĕн икĕ объектĕнче тата икĕ медицина учрежденийĕнче пулса курнă. 2004 çулта, пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем пирки сăмах пыман чухнех, патшалăх пуçлăхĕ Чăваш Енри агропромышленноç аталанăвĕпе тата пурăнмалли çурт-йĕр строительствипе паллашнă.





Пирĕн пĕрремĕш репортаж валли Тренккассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула суйласа илни ăнсăртран мар. Кăçал вăл инноваци шкулĕсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăрса «Вĕрентӳ» наци проекчĕ шучĕпе Раççей Президенчĕн патшалăх пулăшăвне – 1 миллион тенкĕне илме тивĕçнĕ. Кунсăр пуçне шкулти икĕ педагог 100-шер пин тенкĕ укçан парнесем илме пултарнă.

Президент гранчĕпе шкул коллективĕ хăй пĕлсе усă курнă – куçăмлă компьютер класĕ, интерактивлă 3 проектор туяннă, педагогсен квалификацине ӳстерме чылай укçа-тенкĕ янă. Çывăх вăхăтрах вара шкула компьютерлă лингафон кабинечĕ килсе çитет. Ун чухне ют чĕлхесене шĕкĕлчĕç кăна!

Иртнĕ çул шкул наци проекчĕ шучĕпе федераллă укçа-тенкĕпе хими кабинечĕ валли оборудованисен комплектне, вĕрентӳ сĕтел-пуканĕсене, шкул столовăйĕ валли оборудовани тата ыттине те илнĕ. Кун пек республика программипе вара – физика, биологи тата технологи кабинечĕсем валли хальхи вĕрентӳ оборудованийĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**МУРКАШ ТЕРРИТОРИ СУЙЛАВ КОМИССИЙĔН ЙЫШĂНĂВĔ**

**2007 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ 7/2 №**

### Муркаш районĕнчи вырăнти самоуправлени органĕсене депутатсем суйлассипе хушма суйлавсем ирттерессипе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен тивĕçĕсене пурнăçлама шанса парасси çинчен

«Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав прависен тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен» Федераллă саккунăн 25-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе, Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен» Саккунĕн 10-мĕш статйин 7-мĕш пункчĕпе тата 14-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн, Муркаш территори суйлав комиссийĕ çапла **йышăннă:**

1. Пĕр мандатлă 1-мĕш номерлĕ Октябрьски тата пĕр мандатлă 7-мĕш номерлĕ Мăн Тутаркас суйлав округĕсемпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе хушма суйлавсем ирттерессипе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссийĕсен тивĕçĕсене пурнăçлама Муркаш территори суйлав комиссине шанса парас.
2. Пĕр мандатлă 5-мĕш номерлĕ Çурçĕр суйлав округĕпе депутатсен Муркаш ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне суйлассипе хушма суйлав ирттерессипе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Муркаш территори суйлав комиссине шанса парас.
3. Пĕр мандатлă 10-мĕш номерлĕ Тушкасси суйлав округĕпе депутатсен Турай ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне суйлассипе хушма суйлав ирттерессипе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Муркаш территори суйлав комиссине шанса парас.
4. Пĕр мандатлă 10-мĕш номерлĕ Канаш суйлав округĕпе депутатсен Юнкă ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутатне суйлассипе хушма суйлав ирттерессипе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Муркаш территори суйлав комиссине шанса парас.
5. Пĕр мандатлă 4-мĕш номерлĕ Иштерек тата пĕр мандатлă 8-мĕш номерлĕ Кӳстерек суйлав округĕсемпе депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсене суйлассипе хушма суйлав ирттерессипе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Муркаш территори суйлав комиссине шанса парас.
6. Çак йышăнăва пичетлеме районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата ярса парас.

**Территори суйлав комиссийĕн председателĕ А.В. АНДРЕЕВ.**

**Территори суйлав комиссийĕн секретарĕ В.К. СОРОКИНА.**

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

## Ыйтусем татăласса шанаççĕ, кĕтеççĕ

Иртнĕ юн кун йăлана кĕнĕ тăрăх республикăра пĕрлехи информаци кунĕ пулса иртрĕ. Çавна май пирĕн района ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В. К. Тихонов, РФ ПФ Чăваш Республикинчи уйрăмĕ – патшалăх учреждени ертӳçи Р. А. Кондратьева, “РФ Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи лабораторийĕ” патшалăх учреждени ертӳçи Л. П. Морозов тата ыттисем килчĕç. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю. А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн кăçалхи 8 уйăхри социаллă-экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ, çавăн пекех татса паман ыйтусем çинче те чарăнчĕ.

В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкăн (унта выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ертӳçи Н.С. Яковлев, районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физультурăпа спорт пайĕн ертӳçин çумĕ З.Ю. Дипломатова кĕчĕç) чи малтанах К. Иванов ячĕллĕ хуçалăхра пулчĕ, бухгалтери ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕ. Хуçалăх ертӳçин тивĕçĕсене 2 уйăх пурнăçлакан Р.А. Грачев хуçалăха йывăрлăхран туртса кăларакан çул-йĕре ĕне выльăх ĕрчетессинче курать. Хуçалăха чĕрĕ укçа илсе килекенни те паян сĕт кăна кунта. Ăна Муркашри сĕт заводне леçеççĕ. Çапла майпа пĕчĕккĕн парăмсене татаççĕ. Анчах та вĕсем мăй таранахха вĕсен. Паян хуçалăхра 25 çын. Вĕсене хальхи ĕç укçине пама та сĕт укçи пулăшрĕ. Анчах та ку таранччен пуçтарăннă ĕç укçин парăмĕ хăçан татăлассине калама йывăр.

– Тыр-пула пухса кĕртрĕмĕр. Халь кашни кунах парăмсем пирки “чупатăп”, - тет Р. А. Грачев. Тепĕр уйăхран ирттерме палăртнă хуçалăх ĕçченĕсен пухăвĕнче хуçалăхăн малашлăхĕ уçăмланассине шанать вăл.

Кунта та, Çатракасси шкулĕнче вĕрентекенсемпе иртттернĕ тĕл пулура та сăмах çывхарса килекен суйлав çинчен пулчĕ. Учительсемпе иртнĕ тĕл пулура Владимир Карлович РФ Президенчĕ В.В. Путин Чăваш Республикине килсе кайни, республикăн юлашки вăхăтри ӳсĕмĕсем, кăçалхи декабрь уйăхĕнчи РФ Патшалăх Думин суйлавĕ çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Хальхинчи пĕрлехи информаци кунĕн темисем шăпах çаксем пулса тăраççĕ-çке. Суйлав результачĕсенчен республикăн çеç мар, районăн малашнехи аталанăвĕ те чылай килнине палăртрĕ. Çатракасси тăрăхĕн суйлав участокĕ çак шкулта пулать. Ку ялти тĕслĕх библиотекăра “Кун хыççăн кун” кĕтес йĕркеленĕ. Унта çывхарса килекен суйлав пирки те ăнлантару ĕçĕ пыни курăнать.

Çатракассинчи шкулпа библиотекăра иртнĕ тĕл пулусенче информаци ушкăнĕ патне ыйтусем пулмарĕç пулсан, Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕрентекенсемпе иртттернĕ тĕл пулура вĕсене пăшăрхантаракан ыйтусем чылаях пулни курăнчĕ.



Асăннă шкул йывăç çуртра вырнаçнăран, вĕсене чи малтанах унăн малашнехи шăпи пăшăрхантарать.

– Кашмашра шкул тăвас ыйтупа ăçта кăна тухмарăмăр, анчах та çак ыйтăва район шайне антарни ку ыйтăва уçăмлăх кĕртест. Çĕнĕ шкул ыйтăвне район шайĕнче татса пама çуккине эпир ăнланатпăр, çавăнпа спонсорсем шырас ыйтăва асрах тытатпăр. Яллă вырăнсене аталантарассипе ĕçе “çӳлтен” татах та лайăхлатмалла пек туйăнать, – тет шкул директорĕ Г.П. Ершова.

– Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн çак шухăшне эпĕ ырлатăп. “Шкулсен ĕçне вĕсенчи миçе ача аслă вĕрентӳ заведенийĕсене кĕнĕ тăрăх хаклама пăрахмалла пирĕн”, – терĕ вăл пĕр тĕлпулура, – калаçăва хутшăнчĕ тепри:–Ялти шкул пирĕн тăван тăрăха кирлĕ, ял хуçалăхне аталантарма пултаракан çынсене кăлармалла, хуласенчи картиш шăлакан ан пултăр ял шкулĕнчен вĕренсе тухнă ача.

– Мĕн тесен те “çӳлте” яллă вырăнсене, ял хуçалăхне аталантарассине çителĕксĕртерех тимлĕх уйăраççĕ. Ялта та çынсемех пурăнаççĕ. Хулара пурте вырнаçса пĕтеймĕпĕр. Çак шухăша республикăна çитермех тăрăшăр, – терĕ Галина Павловна информаци ушкăнне ăсатса янă май.

Ыйтусем вара кунта татах та пулчĕç.

– Кашмашра çулла шыв пăрăхĕнчи шыва ĕçсе те кураймастпăр.

– Çĕнĕ урама электричество çутине кĕртес ыйту хăçан татăлĕ-ши?

– Хуçалăх правленийĕ патĕнче автобуса кĕтмелли вырăнта павильон кирлехчĕ.

– Мĕн валли кăна укçа тупмаççĕ пулĕ, районсенчи радиовещанине çĕнĕрен йĕркелеме республикăра нивушлĕ укçа тупаймаççĕ?

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.А. Кожевников та, информаци ушкăнĕнчисем те паянхи кун вăл е ку ыйту мĕнле татăлма пултарасси çинчен ăнлантарчĕç. Хăвăрах куратăр, вырăнта татăлмалли ыйтусемпе пĕрлех республикăна тухмасăр татма йывăр ыйтусем те пур.

Асăннă информаци ушкăнĕ çак кун “Свобода” хуçалăха кĕрсе тухрĕ. Унтан “Моргаушкорм” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулчĕ. Унăн ертӳçи Д.П. Анисов выльăхсем валли тырă хутăшĕсенчен тутлăхлă апат епле хатĕрленине кăтартрĕ.

– Хăть пăрусене, хăть сысна çурисене çитер – унăн усси куçкĕретех, – ăнлантарать асăннă хуçалăх ертӳçи Д.П. Анисов.

Пĕрлехи информаци кунне хутшăннă тепĕр икĕ ушкăн Турай тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕ. Юлашкинчен информаци ушкăнĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле тĕл пулусенче хускатнă ыйтусем тавра калаçрĕç, вĕсене татса памалли çул-йĕре палăртрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Кĕрхи ĕçсем пирки**

## Хирсем пушанаççĕ

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем район администрацийĕн ял хуçалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе район уй-хирĕсенче кĕрхи ĕçсем епле пыни яр уççăн курăнать. Ĕнерхи кун тĕлне районта тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем вырас ĕç вĕçленнĕ темелле. Хуçалăхсем пушаннă хирсемпе пусу уйĕсене пĕтĕмпе 4701 гектар (пĕлтĕрхинчен 1500 гектар майлă ытларах) кĕрхи культурăсем акса хăварнă. Вырма ирттернĕ хирсенче улăм та çукпа пĕрех ĕнтĕ.

Вырма ĕçĕсенчен пушаннă хресчен паян çĕр улми пуссинче вăй хурать. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче кăçал лартнă 900 гектар “иккĕмĕш çăкăртан” ĕнерхи куна 346 гектарне кăларса пуçтарса кĕртнĕ. Çĕр улми кăларас ĕçе уяр кунсенче “Восток”, “Оринино” ял хуçалăх производство кооперативĕсенче вĕçленĕ. Ку ĕç “ДаАн” обществăпа “Герой” хуçалăхра тата Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче те юлашки гектарсем çинче юлнă.

Хальлĕхе çĕр улмин вăтам тухăçĕ гектар пуçне районĕпе 117,6 центнерпа танлашать.

**Пĕлтерӳ**

## Суйлав комиссийĕ ĕçлет

**Муркаш территори суйлав комиссийĕ 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен ĕçлет. Апат вăхăчĕ – 12 сехетрен 13 сехетчен. Шăмат кун апат вăхăчĕсĕр 8 сехетрен пуçласа 14 сехетчен ĕçлет. Вырсарни – кану кунĕ.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Хаклăран та хаклă, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăрăн – Ярапайкасси ялĕнче пурăнакан **Иван Константинович ПОРТНОВĂН** çуралнă кунĕ, вăл 60 çул тултарать. Мăшăрăма, аттене, çывăх тăванăмăра юбилейпе чĕререн саламлатпăр, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Эс пурришĕн Турра тав тăватпăр. Ырă кăмăлушăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити таймапуç. Сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе тăванĕсем.**

---

Пирĕн юратнă хăтана, Çĕньял Апашра пурăнакан **Юрий Дмитриевич ДМИТРИЕВА** сумлă юбилейпе – 60 çул тултарнă ятпа кăмăлтан саламлатпăр. Ĕçре ответлăха туйса вăй хурса халăх хисепне тивĕçрĕн. Ырă кăмăлупа, пулăшма ялан хатĕр пулнипе тăванусен юратăвне çĕнсе илтĕн.

Ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр, сывлăху нихăçан та ан хавшатăр, кăмăлу яланах уçă пултăр.

**Сире сума суса тата хисеплесе Крысинсен çемйи (тăхлачипе хăти, Пăсăрман ялĕ).**